2017-2018 - мĕш вĕренӳ çулĕнче
шкул шайĕнчи 11 - мĕш класра чăваш чĕлхипе тата литературипе ирттермелли олимпиада хуравĕсем

Олимпиада ирттермелли вăхăт - 120 минут.
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумаййи 50 балл пухма пулать.

1. Пулăвне кура сăмахсене икĕ ушкăна (пĕрремĕшле е иккĕмĕшле) уйăрса çырăр. *(Кашни тĕрĕс мар палăртнă сăмахшăн 0,5 балл чакармалла. Пурĕ - 5 балл)*
Тăкак, калак, чăмлак, пуклак, куршанак, пăрлак, сукмак, ашак, пылак, пушмак, чăмăртак, кăвасак, тумлак, калпак, курак, шыçмак, чарак, патак, кăвак, сулмак.

2. Хутлă предложенири хутсăр предложенисен чиккине, предложенисенчи тĕп членсене тупăр. Хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннине палăртăр та хутлă предложени тĕсне калăр. *(Тĕрĕс хуравшăн 5 балл лартмалла. Кашни йăнăшшăн е çитменлĕхшĕн 0,5 балл чакармалла)*

Ура айĕнче тем чăштăртатнине илтсе Ваççа пĕшкĕнчĕ те тĕмĕ ăшĕнче пытанса ларнă тăмана чĕппине курчĕ. (Ю.Скворцов.)

3. Пулă ячĕсене чăвашла куçарăр. Хăвăртан тата тăватă кайăк ятне вырăсла-чăвашла хушса çырса парăр. (*Кашни тĕрĕс куçарушăн+хăйсем тупнишĕн 0,5 балл. Пурĕ - 5 балл)*

Щука, карась, лещ,окунь,налим, пескарь

4. Чи малтан чăваш сăмахĕсене кам тата миçемĕш çулта тĕнче умне кăларнă? *(5 балл)*

5. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр. *(Тĕрĕс хуравшăн 5 балл лартмалла. Кашни йăнăшшăн е çитменлĕхшĕн 0,5 балл чакармалла)*

1) Сивĕ яшка сивĕтмест, … . 2) Çавра çăмартан кĕтесси çук, … 3) Калакан маннă, … . 4) Икĕ мулкача хăвалакан … . 5) Кахалшăн çĕр кĕске, … 6) Ӳркев ӳкерет, … . 7) Ир тăракан çырла çинĕ, … .

6. П.П. Хусанкай «Тилли юррисем» поэминчи сăвăсене мĕнле формăсемпе усă курса çырнă? *(3 тĕрĕс хуравшăн 5 балл лартма юрать. Кашни йăнăшшăн е çитменлĕхшĕн 0,5 балл чакармалла. Пурĕ - 5 балл)*

7. Çеçпĕл Мишши хăйĕн сăввисем, çырăвĕсем айне мĕнле хушма ятсем (псевдонимсем) лартнă? *(Пурĕ - 5 балл)*

8. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă çыравçăсене çырăр (çичĕ ятран кая мар). *(Çичĕ тĕрĕс ятшăн 5 балл лартмалла. Кашни йăнăшшăн е çитменлĕхшĕн 0,5 балл чакармалла)*

9. *«Каçхине, хăйĕн хытă вырăнĕ çине выртса утиялпа пĕркенсен, патша тепĕр хут чăвашсем çинчен аса илет. Мĕнле халăх вăл – чăвашсем? Камсем вĕсем? Сунарçăсем-и? Атăл таврашĕнче пурăнаççĕ, тен, пулăçсем пуль?.. Мĕнле телейлĕ халăх вăл – чăвашсем: вĕсем çинчен патша шухăшлать!..»* Сăмах мĕнле патша пирки пырать? Хăш хайлавран тата авторĕ кам? *(5 балл)*

10. «Нарспи» поэмăра миçе сыпăк? *(5 балл)*